Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско–юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Силэм Юлия Александровна**

**Книга: Капелька = Тумлам**

## Сказка: Тумлам

Пурӑннӑ тет ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере Тумлам. Сеп-сенкер, пысӑк-пысӑк куҫлӑ. Пӳске пек ҫаврака. Мӑтӑрт-мӑтӑрт мӑнтӑркка. Питӗ илемлӗскер. Пӗррехинче вӑл уҫӑлма тухрӗ.

− Мана пӑрахса ан кай, − йӑлӑнчӗ Ҫӗр.

− Ҫук, каятӑп. Йӑлӑхтарчӗ ҫӗр ҫинче, терӗ Тумлам.

Йӑкӑшт ярса пусрӗ малалла. Тӳрех Сивӗ килсе ҫӳҫентерчӗ.

− Ай! − йӑпшӑнчӗ Ҫӗр ҫумнерех.

− Ан хӑра, Тумлам. Эпӗ сана шӑнтса пӑрлантармастӑп, − терӗ Сивӗ.

Тумлам йӑкӑлт-йӑкӑлт сиккелерӗ. Тӑпӑрт-тӑпӑрт тутарчӗ. Хуҫкалансах ташларӗ. Алӑ ҫупсах савӑнчӗ. Йӑлтах ӑшша пиҫрӗ.

Сасартӑк Ҫил сиксе тухрӗ.

− Ай, вӗҫтерсе каять, − хӳтлӗх шырарӗ Тумлам.

− Ан хӑра манран, − терӗ Ҫил. − Эпӗ санпа пӗрле вӗҫӗп.

Тумлам малалла ыткӑнчӗ. Кӗтмен ҫӗртен Хура Пӗлӗт килсе хурлантарчӗ.

− Ан хӑра, Тумлам, − терӗ Пӗлӗт. − Лар ман ҫине. Чуччу ярӑнтарӑп.

Лартрӗ те Тумлама хӑй ҫине вӑр-вар ҫаврӑнтарчӗ.

Аслати кӗр кӗрлерӗ кӗтмен ҫӗртен. Хӑлтӑр-хӑлтӑр хӑлтӑртатрӗ. Хӑнтӑр-хӑнтӑр тутарчӗ. Шартах сиктерчӗ. Тумлам шикленсех ӳкрӗ.

− Ан хӑра, Тумлам, − ҫине-ҫинех шарт та шарт авӑтрӗ Аслати. − Эпӗ сана тӗнче кӗрлевне кӑтартӑп.

Лартрӗ те Тумлама хӑй ҫине кӑр-р кӑна кӗрлеттерчӗ.

Сасартӑк Ҫиҫӗм ҫиҫрӗ ялтлатса. Тумлам куҫне мӑч-мӑч мӑчлаттарчӗ ытла ҫутӑ ӳкнипе.

− Ан хӑра, Тумлам, − терӗ Ҫиҫӗм. − Эпӗ сана Сарӑ кун ҫӗршывне илсе ҫитерӗп.

Ҫиҫсе пыратчӗ хайхи Ҫиҫӗм ҫиҫкӗнлӗхӗпе. Пат! тумларӗ ун ҫине тепӗр тумлам.

− Ай! − айлатрӗ Тумлам. − ӳкетӗп.

− Аван-и! − шавларӗ Ҫӗнни. − Эс те Тумлам. Эп те Тумлам. Иксӗмӗр пулӑпӑр пы-ысӑк Тумлам, − терӗ те унпа пырса пӗрлешрӗ.

− Эсӗ пысӑкланса кайнӑҫке! − парашютпек вӗҫсе анчӗ Тумлам умне Ҫулҫӑ. − Эпӗ сана хӳтлӗх парӑп. Симӗс ҫулҫӑ ҫине вӑшт кӑна вырнаҫрӗ Тум-лам. Ларчӗ-ларчӗ ҫапла. Ӑна сасартӑк тунсӑх пусрӗ.

Сивӗ ҫухалнӑ. Ҫил ҫук. Пӗлӗт пытаннӑ. Аслати лӑпланнӑ. Ҫиҫӗм ҫиҫмест.

Хӑҫанччен лармалла-ха ҫапла ҫулҫӑ-парашют ҫинче? Йӑкӑлт турӗ унталла, мӑкӑлт турӗ кунталла.

− Кил хам патӑма, Тумлам! − хӗрхенчӗ Хӗвел. Вӑрӑм аллисене тӑсрӗ. − Кил, кил, манӑн шевлесемпе выляса савӑн.

Хӗвел Тумлама хӑй патне илчӗ.

− Пӑчӑхсах вилетӗп вӗт эп сан патӑнта! −хурланчӗ Тумлам. − Манӑн ҫӗр ҫинех каяс килет. Яр мана, тархасшӑн.

Хӗвел чармарӗ.

Ҫав вӑхӑтра тӳпере Асамат Кӗперӗ карӑнчӗ.

−Лар ман ҫине! − чӗнчӗ Тумлама. Ҫапла каларӗ те ӑна хӑй ҫине лартрӗ.

Туххӑмрах ярӑнтарса ҫитес ҫӗре ҫитерчӗ.

Тумлам урипе çӗр çине ярса пусрӗ. Чупсах каясшӑнччӗ. Ӗлкӗреймерӗ. Таçтан пӗтӗрт-пӗтӗрт Тӗтре сикрӗ тухрӗ. Умри çула картларӗ. Куçӑм нимӗн те курмасть, − тӑп чарӑнса тӑчӗ Тумлам.

−Ан хурлан. Эпӗ сан йӑвуна ӑшӑтма килтӗм, − йӑсӑрланчӗ Тӗтре.

Тумлам вӑл каясса чӑтӑмлӑн кӗтрӗ. Кӗçех тӗтре сирӗлчӗ. Таврара çутӑ та ӑшӑ пулса тӑчӗ.

Тумлам каллех çӗр çинче сиккелеме пуçларӗ. Вӑл питӗ-питӗ хӗпӗртерӗ. Ӑна çӗр çинчех пуринчен те ытларах килӗшрӗ.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.